**Анатолий ЮМАН**

# Асӑмри Нямань, Михаил Иванович



Иртнӗ ӗмӗрти 1960-1970 ҫулсенче Шупашкара пымассерен эпӗ хамӑн юратакан «Коммунизм ялавӗ» хаҫат редакцине кӗрсе курма васкаттӑм. Кунта яланах мана хаҫатӑн ответлӑ секретарӗ Михаил Иванович Юрьев-Нямань (1910-1980) хӑйӗн пӳлӗмӗнче ӑшшӑн кӗтсе илетчӗ. Ӗҫӗ тем пек нумай пулсан та сывӑх тӑван евӗрех калаҫма ерӗҫетчӗ вӑл. Ҫав хушӑра чӗлӗмне те ҫӑвартан кӑлармастчӗ, пуҫ ҫӗклемесӗр вулакан материалӗсене ҫине-ҫинех набора ӑсататчӗ. Чӗмпӗр тӑрӑхӗнчи чӑвашсен литературӑри пурнӑҫӗпе ҫав тери интересленетчӗ, чӑвашла тухакан хаҫатсем ҫинчен ыйтса пӗлетчӗ.

Мӗн тери ырӑ канашсем паман пулӗ Михаил Иванович! Вӑл тӑван чӗлхене юратма, тарӑн шухӑшлама, ҫырма вӗрентнӗ. Унӑн анлӑ тавра курӑмӗ, пысӑк ӑс-хакӑлӗ, ҫынлӑхӗ ман пата ҫырнӑ ҫырусенче яр уҫҫӑн курӑнать.

1974 ҫулхи январӗн 8-мӗшӗ.
Шупашкар.

Ырӑ кун пултӑр, Анатолий Федорович!

Ҫӗнӗ ҫул саламне те, сӑн ӳкерчӗксене те илтӗм. Пысӑк тав. Хӑвӑра ҫак Ҫӗнӗ ҫулта яланхи пекех телейлӗ, ҫирӗп сывлӑхлӑ пулма ырӑ сунатӑп.

Сирӗн ҫырӑвӑртан эпӗ ҫакна ӑнлантӑм: ман адреспа Эсир ятарласа ҫыру янӑ иккен. Шел, вӑл мана лекмен. Мӗншӗн тесен эпӗ июнӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа редакцире ӗҫлеместӗп. Пенсионер. Редакцире партпухусем вӑхӑтӗнче ҫеҫ пулатӑп.

Ҫырӑва алла илейменшӗн пӑшӑрханатӑп, анчах нимӗн те тӑваймастӑп. Чӑрмав пулсан та, манӑн килти адреспа тепӗр хут ҫырса ярӑр. Тем пекех кӗтетӗп.

Эсир пысӑк япала ҫырса пӗтерни мана чун-чӗререн савӑнтарать. Халӗ ӗнтӗ ӑна кун ҫути кӑтартас пирки шухӑшламалла пулать. Ку тӗлӗшпе халех Н.С.Дедушкин юлташпа ҫыхӑнма тӑрӑшӑр.

Сире ырӑ сунса – М.Юрьев...»

«1974 çулхи январĕн 22-мĕшĕ.

Шупашкар.

Ырă кун пултăр, Анатолий Федорович!

Çырăвна та, хăвăр çинчен çырса пĕлтернине те илтĕм. Тимленĕшĕн тавтапуç. Халĕ ĕнтĕ шикленмелли нимĕн те юлмарĕ. Мĕн кирли пĕтĕмпех алă айĕнче.

Ўкерчĕксем пирки шухăшласа пăхăр эппин. Мана пурте килĕшрĕç иртнĕ çырура ярса панисем. Хăвăра килĕшсех каймаççĕ пек туйăнать пулсан – çĕнĕрен ўкерттерни, паллах, тата лайăхрах пулĕччĕ. Ўркенместĕн пулсан – хатĕрлесе ярса парăр. Капла тунине эпĕ саламлама çеç пултаратăп.

Эсир хăвăр çинчен тĕплĕн çырса пĕлтерни мана яланах кирлĕ пулать. Çавăнпа та эпĕ сирĕн пурнăçăрпа тата ĕçĕрпе çыхăннă пайăр ятсене вырăсла та паллă туса хурасшăн хам валли. Сăмахран, çак ятсене вырăсла куçарса çырса пĕлтерме вăхăт тупас пулсан – тем пекех тав тунă пулăттăм:

1. Чăвашкасси (хăвăр çуралнă ял ячĕ);

2. Пухтел (ĕлĕкхи район ячĕ – Богдашкинский мар-и вăл вырăсла?);

3. Кивĕ Улхаш (малтан вĕреннĕ шкул ячĕ);

4. Вăта Тимĕрçен (вăтам шкул);

5. «Пĕрлешўллĕ ĕç» (хаçат ячĕ, «Коллективный труд» мар-и вырăсла?)

6. «Заря коммунизма» (халĕ ĕçлекен хаçатăн чăвашла ячĕ мĕнле?)

Кĕскен хам çинчен: пурнăç чиперех пырать, кунпа çĕр яланах хулари библиотекăсенче иртет. Нумай пулмасть «Писатели Советской Чувашии» кĕнеке çырса пĕтертĕм. Ал çырăвĕ тахçанах хатĕрччĕ. Кашни çулах «тепĕр çула» хăварса пычĕç. Халĕ вара тakăмăн пуçне таçтан темĕнле шухăш пырса кĕнĕ: çитес çулта обязательно кăлармалла тесе çĕнĕрен тĕплĕн пăхса тухтарчĕç. Паллах, çĕнетмелли, якатмалли, хушмалли, хĕсмелли питĕ нумай пулчĕ. Пенсие тухнă хыççăнхи вăхăта пĕтĕмпех çавăнпа айкашса ирттертĕм.

Малашнехи плансем: халиччен çыркаланисене пĕр çĕре пухса кĕнеке пекки хатĕрлесшĕн. Кăна та юлташсем официаллă йĕркепе аса илтерчĕç. Кунсăр пуçне журналсене хутшăнма ĕмĕтленетĕп. Хаçатра ĕçленĕ чухне журналсем валли çырма вăхăт çукрахчĕ. Хаçат секретарĕн ĕçĕ мĕнлине хăвăрах лайăх чухлатăр.

Сывă пулăр. Кил-йышăра та пысăк салам калăр. Сирĕн çырăвăра кĕтсех тăратăп. Эсир çĕнĕ хăватпа ĕçлеме тытăнни мана чун-чĕререн савăнтарать. Ĕçĕрсем малашне те ăнăçлă пулчăр.

Сире ырă сунса – М.Юрьев».

«1974 çулхи февралĕн 5-мĕшĕ.

Шупашкар.

Ырă кун пултăр, Анатолий Федорович!

Паян каçалапа çырăвăра та, сăн ўкерчĕксене те илтĕм. Тавтапуç тимленĕшĕн. Ўкерчĕксем пурте вырăнлă. Вĕсене, кирлĕ пулсан, пĕчĕклетме те, пысăклатма та пулать.

Шупашкарта çĕнĕ хыпарсем хальлĕхе нимех те çук. Писательсем хĕрсех А.Артемьев юбилейне хатĕрленеççĕ. Кăçал вăл 50 çул тултарать. Хăй вара çав тери кулянса çўрет: хам 50 çула çитнине ниепле те ĕненес килмест тет. Мĕн тăвăн ĕнтĕ, çут çанталăк законĕ çавăн пек!

Сире чун-чĕререн хисеплесе – М.Юрьев».

Çак конверт ăшĕнчех тепĕр çыру:

«Анатолий Федорович!

Ку çырăва тахçанах çырасшăнччĕ,

анчах ниепле те алă çитеймерĕм. Халĕ акă сирĕн пата çырнă çырăва конверт ăшне хурса çыпăçтарнă хыççăн тин аса илтĕм. Çавăнпа ĕнтĕ ку хута çыпăçтарнă конверта тепĕр хут уçса хурса яратăп.

Сăмахăм акă мĕн пирки: сирĕн районти Каша (Кайсарово) ялĕнче литературăна юратакансем В.Садайпа Ехрем Иванĕ çеç мар иккен. Тăван литературăшăн хыпса çунакансем тахçанах пулнă-мĕн. Çавсенчен пĕри – çав ялта çуралса ӳснĕ Кузьма Васильевич Репин. Вăл – 1889-1900 çулсенче çуралнă çын. Чĕмпĕр шкулĕнче вĕреннĕ. Граждан вăрçинчен хăрах урасăр таврăннă. 1920 çулсенче вилнĕ.

К.В.Репин – литература историне кĕме тивĕçлĕ çын. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен вăл хăй вăхăтĕнче сăвăсем çырни, халăх хушшинче сăмах вĕççĕн çӳрекен халап-юмахсемпе сăвă-юрăсем пухни çинчен калакан хыпарсем те пур. Тăван литература историйĕшĕн чи пахи – К.В.Репин критикăлла статьясем те çырнă. Уйрăмах савăнтараканни тата çакă: К.В.Ивановăн «Нарспи» поэмине чи малтан вăл тĕплĕн тишкернĕ, ун çинчен статья та çырнă. Статйи начар мар!

Ун çинчен тĕплĕнрех пĕлес тесе эпĕ чылай çĕре çыртăм. Вăл хăçан, хăш çулта, мĕнле уйăхра, мĕнле числора çурални çинчен пĕлес тесе сирĕн область архивĕсенчен те, Чăнлă районĕнчи ЗАГС уйрăмĕнчен те, Каша ялĕ кĕрекен ял Совет ĕçтăвкомĕнчен те (Елхово-Озерский сельсовет – чăвашла мĕнле-ши вăл – пĕлместĕп) ыйтса пĕлтĕм. Анчах усси пулмарĕ. Облаçри архивсенчен «проверить и подтвердить регистрацию рождения К.В.Репина (1890-1920) нет возможности из-за отсутствия архива на хранении» тесе пĕлтерчĕç; сирĕн районти ЗАГС архивĕн заведующийĕ Морозова: «... данные о рождении К.В.Репина не представляется возможности, так как нет актовых записей», – тесе ответлерĕ. Елхово-Озерский сельсовет (вырăслах калам-ха) ĕçтăвкомĕн секретарĕ те (хушаматне пĕлме çук – хут укçи çинчи пек алă пуснă!) çав сăмахсемпех ответлерĕ (1972 çулта).

Çав секретарь пĕлтернĕ тăрăх, Кашара халĕ К.В.Репина пĕлекен çынсем пур иккен. Вĕсем çаксем:

1. Репинсен çывăх тăванĕ Клавдия Егоровна Головина. Вăл каланă тăрăх, Репин 1897 çулта çуралнă имĕш.

2. Репинăн тепĕр тăванĕ – Александр Дмитриевич Репин.

3. Репинăн ача чухнехи тусĕ – Сидор Егорович Горшков.

К.В.Репинăн сăн ӳкерчĕкне шырани те ăнăçлă пулмарĕ. Çакăн пирки эпĕ Кашари шкул директорĕ патне те çырнăччĕ, шкулти çамрăк йĕрлевçĕсем пулăшаймĕç-ши тесе ыйтнăччĕ. Сасхура пулмарĕ.

Çак çырупа эпĕ сире акă мĕн каласшăн: К.В.Репинăн кун-çулĕпе ĕçĕхĕлĕ çинчен материалсем пухас ĕçе Каша ачисем мĕн чухлĕ те пулин хутшăнма май тупма пултармĕç-ши? Вĕсем çак ĕçе хăйсем çине илес пулсан – тем пекех ырă ĕç тунă пулĕччĕç.

Редакцирен кам та пулин Кашана ĕçпе кайнă чухне – ăна çак хута тыттарса пăхăр-ха. Тен, мĕн те пулин çĕннине тупса килме пултарĕ! Ырă сунса М.Юрьев».

1976, март 23.
Шупашкар.

Ырă кун пултăр, Анатолий Федорович!

Чи малтанах çакна калам: çурхи илемлĕ кунсем чĕрене савăнтарнă ятпа тата сирĕн пултарулăх ĕçĕнче ырă са-

мантсем пулнă ятпа чун-чĕререн саламлатăп. Ĕçӳсем малашне те ăнăçлă пулччăр!

Халĕ ĕнтĕ ĕç çинчен: сирĕн земляк – В.Садай паян 50 çул тултарчĕ. «Коммунизм ялавĕнче» паян унăн кун-çулĕпе пултарулăхĕ çинчен А.Артемьев çырнă лайăх статья пичетленсе тухрĕ, «Советская Чувашия» хаçатра писателĕн çĕнĕ калавне вырăсла куçарса пичетленĕ. Авторĕ çинчен калани те пур: 29 йĕрке! (Ăна калав тăлмачи хăй çырнă пулмалла.)

Хăвăр хаçатра çак куна мĕнле паллă турăр? Хаçатăн çав номерне пĕр экземпляр тупса ярса пама вăхăт тупма пултараймăр-ши? Тем пекех тав тунă пулăттăм.

Май килнĕ чух çакна та калам: К.В.Репин çинчен çĕнĕ материалсем ярса панăшăн сире тем пекех тав тăватăп. Ун çинчен эпĕ ятарласа статья пекки те хатĕрлерĕм-ха. Чăвашла куçарсанах хаçат варианчĕсене (вырăслине те, чăвашлине те!) ярса пама ĕмĕтленетĕп.

Хам çинчен каламалли нимех те çук: писательсен съездне килсен курнăччĕха пĕр-пĕрне. Çавăн чухнехи пекех пĕтĕмпех çын куçĕнчен пăхас пулать. Алла ручка тытма пуçларăм, анчах куçăхас марччĕ-ха. Ĕмĕтĕмсем малаллах туртăнаççĕ. Халĕ чăваш писателĕсем çинчен çĕнĕ кĕнеке хатĕрлесе çыратăп. Унта эсир те пур. Начар мар пек туйăнать.

Сирĕн çырăва тем пекех кĕтетĕп. Хăвăра та, кил-йышăра та – пысăк салам.

М.Юрьев.

Манăн адрес малтанхи пекех: Г.Чебоксары, ул.Ленинградская, 16, кв.44.

В.Садай çинчен область хаçачĕсем мĕн-мĕн çырчĕç: çав статьясен ячĕсене, авторĕсене, хаçат номерĕсемпе числисене кăтартса (çырса) ярсан питĕ аванччĕ».

**Каллех пĕр конверт ăшĕнче икĕ çыру:**

«26 января 1977 г.,
г.Чебоксары.

Ырă кун пултăр, Анатолий Федорович!

Чăрмантарнăшăн каçар. Сăмахăма тӳрех ĕç çинчен пуçлам: нумай пулмасть эпĕ наукăпа тĕпчев институчĕ çулталăкра пĕрре кăларса тăракан «Ученые записки» текен кĕнеке валли сирĕн земляк Н.Ф.Данилов çинчен пĕр пĕчĕк заметка çырса хутăм. Çавна, тен, сирĕн хаçатра пичетлеме май çук-и? Пирĕн республикăри хула хаçачĕсем (пурте) тата район хаçачĕсем те (халĕ пурте мар-ха!), Аслă Октябрь 60 çул тултарнине хатĕрленнĕ май, ватă коммунистсем çинчен эпĕ çырнă пек япаласем пичетлеме пуçларĕç. Вĕсен рубрикисем тĕрлĕрен: «Аслă Октябрь 60 çул тултарас умĕн», «Пирĕн мухтавлă земляксем», «Çынсем тата çулсем», «Вĕсене халăх манмасть» т.ыт.те. Сирĕн, тен, урăхла рубрикăсем пулма пултараççĕ.

Паян вырăсла çырнисене ярса парасшăн, машинкăпа пичетлесен (через два интервала!) çичĕ страницăна яхăн пулнă. Пирĕн хаçатра вăл пĕр подвал, сирĕн хаçатра 2 подвал пулма пултарать. Машинкăпа 2 экземпляр пичетлеме ыйтнăччĕ, машинисткăсем пĕрре çеç пичетленĕ. Çавăнпа вара сире тĕп ал çырăвне çеç ярса паратăп.

Кирлĕ пулсан – пичетлеме пултаратăр.

Юлашкинчен çакна тархасласа ыйтатăп: ку япалана пичетлес тесе хăвăр коллектив е редактор умĕнче ӳкĕнсе хăвна пăшăрханмалла ан ту. Редак-

торăн пичетлес кăмăл çук пулсан – çунтар та яр. Редакци архивне ан хур.

Статьян чăвашла текстне çывăх кунсенче ярса паратăп.

Çырса пĕлтер. Килти хыпарсене (арăму сывлăхĕ çинчен) пĕлтерме ан ман.

Сире яланах ырă сунакан – М.Юрьев.

Союз членне Мускав хăçан çирĕплетрĕ? Союза кĕме панă рекомендацисен копийĕсене ÿкерсе илсе мана ярса параймĕн-ши?»

«17 июня 1977 г.,

г.Чебоксары, 11 часов дня.

Ырă кун пултăр, Анатолий Федорович!

Ку çырăва чун-чĕрешĕн çав тери йывăр самантра – А.Е.Алгана юлашки çула ăсатма каяс умĕн çыратăп. Чунăма мĕнле те пулин лăплантарма май тупас тесе çапла тăватăп, мĕншĕн тесен тахçантан çывăх пĕлнĕ ырă çыннăма юлашки хут курма каяс умĕн кашни минут темиçе кун тăршшĕ пек туйăнать... А.Е.Алга кунçулĕ вăхăтсăр татăлни маншăн уйрăмах калама çук йывăр, мĕншĕн тесен хамăрăн ĕмĕрĕмĕрте эпир ĕç кунне пĕр кун, пĕр сехетре, пĕр шкулта пуçланă. 1933 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕнче хамăр районти пĕр вăтам шкулта ачасене вĕрентме тытăннăччĕ: вăл вырăс чĕлхи вĕрентетчĕ, эпĕ – чăваш чĕлхи. Çавăнтан вара эпир пĕр-пĕринпе чăн-чăн тăвансем пек пурăннă. Тепĕр темиçе сехетрен акă вăл нÿрĕ тăпрапа витĕнет... Хăрушă! Чăваш литературишĕн тÿсме çук пысăк çухату.

Халĕ ĕнтĕ ĕç çинчен: сирĕн земляк çинчен – К.В.Репин çинчен сирĕн валли статья çырасси çинчен темиçе çул хушши ĕмĕтленсе пурăнаттăм. Анчах ĕмĕтĕме вăхăтра пурнăçа кĕртеймерĕм. Кун пирки эпĕ çĕрĕ-çĕрĕпе пайтах пăшăрханса шухăшланăччĕ. Çак ĕмĕте халĕ тин пурнăçа кĕртме, чĕреме лăплантарма черет çитрĕ. Статьяна малтан чăвашла çырнăччĕ. Ăна тепĕр хут тÿрлетсе юсанă хыççăн вырăсла та çырса хутăм. Çак çырупа пĕрле иккĕшне те – вырăслине те, чăвашлине те ярса паратăп.

Паллах, кăшт пысăкрах пулчĕ. Çапах та куншăн питех хăрама кирлĕ мар. Хăвăра килĕшмен вырăнсене пĕр иккĕленмесĕрех кăскетме пултаратăр. Куншăн пĕр ÿпкев те пулма пултараймасть, мĕншĕн тесен хаçат вăл – трамвай мар. Ун çине хыçалтан е малтан çакăнма май килмест. Кăна эпĕ хамах лайăх ăнланатăп.

Тата тепĕр асăрхаттару: чăвашларан вырăсла куçарнă чухне хăш-пĕр вырăнсене, чăвашла ан янраччăр тесе, вырăсларах калама тăрăшрăм. Анчах чăвашла текстра каланă шухăшсем тĕпрен вырăслинче те пĕтĕмпех сыхланса юлчĕç пек туйăнать. Кĕскетнĕ хыççăн та пысăкрах пек туйăнсан – петитпа наборласа пăхсан мĕнле пулĕши? Шухăшласа пăхăр, хăвăра мĕнле кирлĕ – çавăн пек тăвăр.

Редактор тăкăсланать пулсан – çине тăрса ан сĕн. Ал çырăвĕсене хăвăр патăрта асăнмалăх усра. Хам валли эпĕ иккĕшне те пĕрер экземпляр хăварнă. Чăвашлине К.В.Иванов çуралнăранпа 90 çул тултарнине паллă тунă кунсенче пичетлеме шутлатăп. Унта К.В.Репина пуçламăш шкулта вĕрентнĕ А.Г.Григорьева учительница çинчен тата К.В.Репин К.В.Иванова курни çинчен тĕплĕнрех каласа кăтартасшăн. К.В.Репин статйинче шухăша кăшт анлăлатма ĕмĕтленетĕп...

Сире чун-чĕререн хисеплекен М.Юрьев.

Анатолий! Шупашкарта халĕ К.В.Репина пĕлнĕ-палланă çынсем виççĕн пурăнаççĕ: пĕри – П.Т.Золотов (Чăвашгиз директорĕ пулнăскер), Р.Г.Шумило-

ва – унӑн арӑмӗ, пенсионер-учительница, Чӗмпӗрте Репинпа пӗрле вӗреннӗ; виççӗмӗшӗ – М.А.Волков, вӑл та Репинпа пӗрле вӗреннӗ, кайран нумай çул хушши парти обкомӗнче тата облитра ӗçленӗ, халӗ пенсионер.

Репинӑн пирвайхи учительници А.Г.Григорьева – кайран Чӑвашра пурӑннӑ. Хам та астӑватӑп: пӗр вӑхӑтра вӑл Чӑваш Тӗп ӗçтӑвкомӗн секретарӗ, каярахпа Чӑваш АССР çут ӗç комиссарӗн заместителӗ пулнӑччӗ.

Ун пирки çывӑх вӑхӑтрах КПСС обкомӗн партархивӗнче чаваланса пӑхасшӑн-ха. Хальхи статьяра ун çинчен хушаматне кӑтартнипех иртсе каяс терӗм, мӗншӗн тесен тӗпчесе пӗлмен ӗç çинчен ыттисене калама йывӑр. Апла тума Турӑ ан хуштӑр!

Тӗпчесе пӗлнӗ хыççӑн хӑвна пӗлтерме тӑрӑшӑп.

Ку япаласем çинчен сӑмах май çеç каларӑм-ха сире.

М.Ю.»

«16 августа 1978 г.,
г.Чебоксары.

Ырӑ кун пултӑр, Анатолий Федорович!

Сирӗн çырӑвӑра паян ирхине илтӗм. Çийӗнчех, пӗр минут тӑхтамасӑр, ответлетӗп.

Кӗнеке издательствинчи çутӑ çамкасен черетлӗ мыскари çинчен пӗрремӗш хут илтрӗм, мӗншӗн тесен издательствӑна та, писательсем патне те юлашки виçӗ çул хушшинче ура ярса пусман. Мӗншӗн тесен унта манӑн никампа та парса илмелли çук. Эпӗ – Писательсен союзӗнче тӑракан çын мар. Çавӑнпа эпӗ çырнисене «Ялав» та, «Тӑван Атӑл» та пичетлемест. Хамӑн та йӑлӑнса-сӗкӗнсе çӳрес килмест. (...)

Эпӗ А.Канаш çинчен çырнине хӑвӑр хаçатра пичетлени мана савӑнтарать çеç. Анчах вӑл статьяна эпӗ ларса тата тӗплӗн шухӑшласа çырайман. Ыран хаçат тухмалла тенӗ кун каçхине, хаçатӑн черетлӗ номерне калӑпланӑ чухне, икӗ сехет хушшинче çыртарчӗç редакци çыннисем. (Эпӗ хам статья çырасси çинчен нихçан та аса илмен!) Анчах çырма килӗшекенсем тупӑнман иккен.

Чӑваш писателӗсен йӑли çавӑн пек: чӗррисем çинчен çеç çырма юратаççӗ, вилнисем çине питех çаврӑнса пӑхмаççӗ. Вилнӗ писательтен, паллах, кӗтмелли нимӗн те çук! (Шупашкарти чылай писатель-куккасем коммунизма çавӑн пек пырса кӗреççӗ!..)

Хам çинчен: пурнӑç яланхи пекех пӗр майлӑ пырать, ӑшӑ хӗвелӗм те хӑйӗн çуттине мана грампа çеç виççе парать. Çуттине хӗрхенет. (...) пеккисем те чун ӑшшине питех кӑтартасшӑн мар. Анчах ку мана нимӗн чухлӗ те парӑнтараймасть.

Шупашкарти тӗлӗнмелле хыпарсенчен сана паян çакна çеç хурланса пӗлтерме пултаратӑп: темиçе кун каялла (августӑн 4-мӗшӗнче) «Коммунизм ялавӗ» хаçат редакторӗн пӗрремӗш заместителӗ Иван Михайлович Михайлов (чипер ачаччӗ, чылай çул хушши пӗрле ӗçленӗччӗ) сунар пӑшалӗпе перӗнсе вилчӗ. Хаçатра некролог пулмарӗ. Сӑлтавӗ – çӗр тӗрлӗ. Тахӑшӗ тӗрӗс – паллӑ мар.

Нумай çырнӑшӑн ан ятла. Çырма пуçларӑм та – чарӑнаймарӑм.

Хӑвӑра та, кил-йышӑра та – пысӑк салам. Пурте таса сывлӑхлӑ пулӑр.

Сире яланах ырӑ сунакан этем – М.Юрьев.

Шупашкара килсен – кӗрсе тухма ан манӑр.

«Ульяновская правда» хаçатӑн пӗрпӗр номерне ярса пама май тупма пултарайӑн-ши? Шутсӑр курас килет!»

«10 апреля 1980 г.,
Шупашкар.

Салам, Анатолий Федорович!

Сире эпĕ çакăн çинчен пĕлтерес терĕм: темиçе кун каялла Чăваш АССР кĕнеке издательствинче В.Долгов критик-литературовед çырнă «Ленин сăнарĕ – халăх чĕринче» («Образ Ленина – в сердце народа») кĕнеке иккĕмĕш хут пичетленсе тухрĕ. Малтанхи хут вăл 1972 çулта тухнăччĕ. Çак кĕнекери япаласене автор тепĕр хут тĕпрен çĕнетсе юсарĕ. Кунсăр пуçне çĕнĕ статьясем хушса кĕртрĕ. Кĕнекен çĕнĕ кăларăмĕнче «Чĕмпĕр чулĕ» статья пичетленчĕ. (Малтанхи кăларăмра вăл пулман). Унта ятарласа сирĕн «Чĕмпĕр чулĕ калаçать» кĕнеке çинчен çырнă. Лайăх каланă, шăртланса калаçни, ятлани нимĕн те çук. Кĕнекере ку статья 104-109 страницăсенче.

Çакăн çинчен сире савăнса пĕлтеретĕп. Ку кĕнекене сирĕн валли туянас тесе кĕнеке магазинне темиçе хут та çитрĕм. Анчах туянма май килмерĕ. Мĕншĕн тесен... кĕнеке тиражĕ пурĕ те 1500 экземпляр çеç. Ку тиража кам валли çавăн чухлĕ туни çинчен татса калама, шел пулин те, манăн ăс çитмест. Кĕнекине мана В.А.Долгов хăй парнелерĕ. Хăвăр пата пырса çакланас пулсан илсе юлма тăрăшăр.

Манăн мухтанмалли нимĕн те çук. Авалхи пек суккăр ларатăп. Çакна каласа тĕлĕнтерем: Шупашкарти çутă çамкаллă журналистсенчен ман пата пĕр çын çеç килсе çӳрет: вăл – «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕнчи партбюро секретарĕ В.Ф.Степанов (лайăх çын, ырă çын!); писательсенчен Н.Ф.Евстафьевпа çеç курнăçатпăр. Вăл кашни эрнерех кĕрсе тухать. Çавăн пек çынсем йышлă пулас пулсан – ĕмĕрĕм кичем вĕçленес çукчĕ.

Пурăнасси нумай юлмарĕ пулмалла. Килте çеç ларас килет. Урама тухса çӳрес килмест. Хам суккăрланса пынăшăн тем пекех кулянатăп. Анчах нимĕн те тума пултараймастăп...

Ком.салампа М.Юрьев».

Ку вăл журналистикăра çеç мар, чăваш писателĕсен пултарулăхне пропагандăлас тĕлĕшпе нумай çул ырми-канми ĕçленĕ, тӳрĕ чунлă тĕпчевçĕн, çамрăк чух сăвă-юрă та сахал мар çырнă (вĕсенчен чылайăшĕ хрестоматисене те кĕнĕ), «Чăваш писателĕсем» ятлă чăвашла та, вырăсла та тухнă сумлă справочниксен авторĕн, калама çук сăпайлă та ырă кăмăллă çыннăн ман пата çырнă юлашки çырăвĕ пулчĕ.

Вăхăт иртнипе саралма пуçланă хутсем хушшинче çаплах унăн мухтавлă ывăлĕн, чаплă художникăн, Чăваш Енĕн ку чухнехи символĕсен, гербĕпе ялав авторĕн, Чăваш патшалăх премийĕн лауреачĕн, пиртен вăхăтсăр уйрăлса кайнă Элли Михайлович Юрьевăн хăйĕн ĕçĕсен выставкине пырса курма чĕнсе янă йыхрав хучĕ те сиксе тухрĕ.

Ăста ӳнерçĕ выставки 1986 çулхи декабрĕн 19-мĕшĕнче Чăваш патшалăх ӳнер музейĕн залĕсенче уçăлнăччĕ.